СЕССИ

# ЧĂВАШ ЕН ÇĔНĔ ĔМĔРЕ ÇĔНĔ КОНСТИТУЦИПЕ КĔРЕТ

Юрий МИХАЙЛОВ

«Хыпар»

ЧӲКĔН 30-мĕшĕнче, кăнтăрлахи апат хыççăн, ЧР Патшалăх Канашĕн черетсĕр 23-мĕш сессийĕ малалла ĕçлерĕ. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин медицина страхованийĕн территори фончĕн 2001 çулхи бюджечĕ çинчен» саккунне йышăнчĕ. Çакăн хыççăнах депутатсем ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене Чĕнсе калани патне таврăнчĕç. Ăна «Хыпарăн» чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленĕ, Президент депутатсене Чĕнсе каланипе чӳкĕн 21-мĕшĕнче, 23-мĕш сессин пĕрремĕш пайĕнче паллаштарнă.

Саккунсем хатĕрлес енĕпе ĕçлекен комитет апат хыççăнхи ларăва татса хăйĕн усă ларăвне иртерчĕ. Унта ытти комитетсенчи депутатсем те хутшăнчĕç. Комитет председателĕ В.В.Андреев депутатсене сесси хăйĕн ĕçне малалла тăснă май лару йышăнăвĕпе паллаштарчĕ: асăннă комитетра тăракансем Чĕнсе каланине малалла сӳтсе явма тата Чăваш Республикин Конституцийĕн проектне кĕртме сĕнекен тӳрлетӳсен таблицине /ăна депутатсене валеçсе пачĕç/ тишкерме ыйтаççĕ.

В.М.Андреев депутат ЧР Президенчĕн «Чăваш Республикин Конституцийĕн проекчĕ пирки Чăваш Республикин пĕтĕм халăхĕн сасăлавне /референдумне/ ирттересси çинчен» Указне пăрахăçласан Патшалăх Канашĕн сессийĕнче Конституци йышăнма пултараймастпăр терĕ. Ларăва хутшăннă Н.В.Федоров сăмах илсе хăйĕн асăннă указне пăрахăçлассипе çинчен пĕлтерчĕ /вăл «Хыпарăн» 217-мĕш номерĕнче пичетленнĕ/. Çапла вара ЧР Конституцине чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче йышăнма меллĕ тепĕр май пулса тухрĕ. Президент хăйĕн Указне пăрахăçласси çинчен пĕлтернĕ самантра депутатсен 2/3 пайĕ Конституци йышăнассишĕн сасăласси паллă марччĕ.

Депутатсен пĕр пайĕ ăна йышăнассине мĕншĕн хирĕç пулнă-ха? Чăнах та, депутатсене пурне те Конституци проекчĕн 99 проценчĕ çырлахтарнă. Пĕр сăмах тупайманни, килĕштерменни – проектăн 69-мĕш статйин 3-мĕш пайĕ: «Пĕр çынах Чăваш Республикин Президенчĕн должноçне умлă-хыçлă икĕ срокран ытла йышăнма пултараймасть». Парламентăн коммунистсен фракцийĕ тата хăш-пĕр депутат мĕн юлашкиччен çав йĕркесене Конституцие кĕртсе йышăнтарасшăн пулчĕç. Çавна май вĕсем вăл йĕркесене Конституци проектĕнчен кăларассине хирĕç сасăланă. ЧР Президенчĕ çав йĕркесем – 69-мĕш статьян 3-мĕш пайĕ – Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 55-мĕш статйин 3-мĕш пайĕпе килĕшсе тăмаççĕ тесе шутлать, çав сăлтава пула вăл вĕсене проектран кăларма сĕннĕ. Анчах Н.В.Федоров кăнтăрлахи апат хыççăнхи ларура кун пирки шухăшне улăштарни, хăйĕн сĕнĕвне каялла илни, çакăнпа пĕрлех федерацин Атăлçи округĕн тата ЧР Прокуратурин сĕнĕвĕпе хăй килĕшни тата ăна Конституцие кĕртме сĕнни çинчен пĕлтерчĕ. Ак çакнашкал йĕркесемшĕн вăл: «Чăваш Республикин Президенчĕн должноçне йышăнмалли чараксене Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн кăна çирĕплетеççĕ». Çак шухăш патне Н.В.Федоров федерацин Атăлçи округĕн представителĕпе С.В.Кириенкăпа тата унăн çумĕсемпе тĕл пулса калаçнă хыççăн çитсе тухнине пытармарĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Н.И.Иванов Конституцие Патшалăх Канашĕн сессийĕнче йышăнас текен депутатсене сасăлама ыйтрĕ. Çакнашкал шухăшлисем 63-ĕн пулчĕç, хирĕççисем – 5-ĕн, 7-шĕ темшĕн сасăламан.

Çакăн хыççăн чӳкĕн 30-мĕшĕнче Конституци йышăнма май пурри пуриншĕн те паллăччĕ.

Президент срокĕ пирки калаçнă статьяпа таталмалла та – 5 çул тăсăлакан ĕçе вĕçне çитертĕмĕр теме пулать. И.И.Бакуновец депутат вăрттăн тата бюллетеньпе сасăлама, Г.П.Авдеева депутат ята кăтартса сасăлама /ку депутат мĕнле сасăлани пуриншĕн те паллă пулнине пĕлтерет/ сĕнчĕç. 54 депутат ята кăтартса сасăлассишĕн сасăларĕ.

Акă Президент срокĕпе çыхăннă статья шăпине татса пăрççĕ, «Чăваш Республикин Президенчĕн должноçне йышăнмалли чараксене Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн кăна çирĕплетеççĕ» сĕнӳшĕн сасăламалла.

Электронлă шутлав машини çакна кăтартать: асăннă йĕркесене проекта кĕртессишĕн 66 депутат сасăланă. Ку ĕнтĕ тӳрех Чăваш Ен XXI ĕмĕре Конституцие кĕрессе пĕлтерчĕ. Чăнах та, Конституцие пĕтĕмĕшле йышăнассишĕн 74 депутат сасăларĕ, 2-шĕ кăна хирĕç. Çапла вара Патшалăх Канашĕн черетсĕр 23-мĕш сессийĕ Чăваш Республикин çĕнĕ Конституцине йышăнчĕ.

* * *

Конституци йышăнсанах Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров сăмах каларĕ. Унăн тĕп шухăшĕ çавнашкал.

Президент депутатсем ЧР Конституцийĕ йышăннине пысăка хурса хакларĕ. Депутатсенчен кашниех питĕ пысăк йышăну турĕ. Çапла вара икĕ влаç юпписем пĕрле вăй хурса 7 çула тăсăлнă ĕçе пĕтĕмлетнĕ. Депутатсен чӳкĕн 30-мĕшĕнчи сасăлавĕ Президентпа парламент пĕрпĕрне лайăххах ăнланнине, политика тĕлĕшĕнчен ăсларах пулнине кăтартса пачĕ. Н.В.Федоров Патшалăх Канашĕн депутачĕсем тата ĕç тăвакан влаç пĕр-пĕрин патне пĕчĕк кăна утăм турĕ тесе шутлать, çавна пула пурте выляса илнĕ. Президент пирĕн çивĕч ыйтусене – суйлавçăсен çивĕч ыйтăвĕсене Правительство икĕ хут ытларах вăй хурса татса парасса ĕненсе тăрать. Малашне вĕсем – Президент та, Правительство та – пур енĕпе те пысăк кăтарту тăвасса ĕненсе тăрать, мĕншĕн тесен Конституци йышăнни республика влаçĕн ятсумне республикăра та, ун тулашĕнче те ӳстерет. Федерацин Атăлçи округĕн представителĕ С.В.Кириенко Н.В.Федорова пирĕн Конституцие мĕнлерех йышăнтарассине усăмлă калаçнă. Президент шăпах Кремль сĕннĕ пек йышăнтăмăр терĕ. Чăн та, ĕçĕ Кремль мĕн ыйтнинче мар, Чăваш Ен позицийĕ вăйланас çул çинче пулнинче терĕ.

Президент ĕç укçи, ачаăча пособийĕ тĕлĕшпе çулталăка тивĕçлĕн вĕçлессишĕн талăкĕпех ĕçлĕпĕр терĕ. Ĕç тăвакан влаçа Конституци никĕсĕ туса парса депутатсем çак ыйтусене татса пама май турĕç. Унпа усă курса парăмсене парса тататпăрах терĕ Президент.

Юлашкинчен Президент ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене çĕнĕ Конституци йышăннăшăн тав турĕ.